Муниципаллă бюджетлă вĕренӳ учрежденийĕ
«Пăчăрлă Пашьел пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул»

# Тĕпчев ĕçĕ: «Раштав уйăхĕнчи уявсем»



Ĕçе пурнăçлаканĕ:
Ястребова Софья
Ертӳçи:
Краснова Альбина Николаевна

Тĕпчев ĕçне пурнăçлама хам ума çак **тĕллеве лартрăм:**
1.Чăвах халăхĕн Асанкасси ялĕнчи ĕлĕкхи тата хальхи раштав уйăхĕнчи уявсене тĕпчесси;

**Задачăсем:**
1.Тĕрлĕ литературăпа усă курса раштав уйăхĕнчи уявсене тĕпчесси;
2.Асанкасси ялĕнчи ватăсенчен уявăн сăвви-юррине ыйтса çырасси; ĕлĕкхи йăла-йĕркипе паллашасси;
3. 2 –мĕш класри ачисемпе социалла тĕпчев ирттересси.

**Актуаллăхĕ:** Паянхи кун ку тĕпчев ĕçĕ актуаллă, мĕншĕн тесен вĕренекенсене ял йăли-йĕркине пĕлме, вĕрентекенсене, литературăпа интересленекенсене усă курма кирлĕ ĕç.



# Тĕп пай.

Кашни ялăн хăйĕн йăла- йĕрки, хăйĕн традицийĕ, урăхла каласан ял хавалĕ. Пĕр районтах тĕрлĕ йăла- йĕрке, традицийĕ. Хальхи саманара пур çĕрте те чăвашсем «вырăсланса» кайнă темелле.Вĕсем хайсем чăваш пулнишĕн те именеççĕ,паллах йăла- йĕркесене те пĕлесшĕн мар.

**"Халăх вĕрентĕвĕн пуянлăхне упраса аталантарса пырсан çеç чăваш çĕнĕрен чĕрĕлсе малалла кайма пултарать» тĕнчери ытти халăх йышĕнче тивĕçлĕ вырăна тухать, ĕмĕрхи чапне çĕнетсе, чĕртсе яма шанчăк тупать", - тет педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ Г.Н.Волков.**

Мĕн авалтан чăваш халăхĕ хут çине çырман, анчах та пурнăçра çирĕп тытса пыракан йăла- йĕркесемпе пурăнать.Чăваш йăла- йĕркинче, тыткаларăшĕнче тăван халăх ăс-хакăлĕ,кăмăл туйăмĕ палăрать.



«Йăлă çапла», «авалхи йăла хушать», «йăларан тухар мар»- илтетĕн халăхра час-часах. Çав нумай-нумай йăласемпе йĕркесене халăх шутласа кăларнă. Йăласемпе йĕркесем нихăçан та улшăнмалла мар тенĕ пулсан, эпир калама çук йăнăш тунă пулăттăмăр.Анчах вĕсем ,сыпăкран сыпăка,йăхран йăха куçса пыраççĕ.

Асанкасси ялĕнчи уявсене мĕнле ирттернĕ-ши? Паянхи кун вĕсем мĕнле вырăн йышăнаççĕ-ши?

Çак ыйтусене хуравлама Асанкасси ялĕнче çуралса пурăннă, 75-ри Инголова Зоя Семёновна (манăн ват кукамай) пулăшрĕ.



Хĕллехи вăхăтра пысăк уявсем пулнă.Раштавра Христос çуралнине паллă тунă .

Раштав килет çулпала,
Кăвак лаша юрттарса,
Шур лашине чуптарса.
Раштав телей сунать-çке.
Ĕçчен Петĕр мучине.
Тырри нумай пултăр, тет.
Ăна пире патăр,тет.

Инголова Зоя Семёновна каласа панă тăрăх, Асанкассисем раштав уявне кўршĕри Тутарстан республикинчи Матак ялне хăнана кайнă.Вĕсем вара пирĕн пата Çăварни уявĕнче илемлетнĕ лашасемпе килнĕ.






# Кивĕлле Çĕнĕ çул.

Кивĕ стильпе Çĕнĕ çул кăрлачăн 14-мĕшĕнче пуçланнă. Çак куна хирĕç, кăрлачăн 13-мĕшĕнче, хĕрсемпе каччăсем улах ларма пуçтарăнаççĕ.



Ытти чухнехи пекех, ал ĕç тăваççĕ, юрлаççĕ, выляççĕ. Çур çĕр çитес умĕн юмăç яма пуçлаççĕ. Малашне пурнăç мĕнле килессине, мăшăрĕсем кам, мĕнле пулассине, кăçал качча каяссине е авланассине пĕлесшĕн çунаççĕ.

Урамра хĕрсемпе каччăсем «Мĕн ĕçетĕр, мĕн çиетĕр?»,«Ман упăшка мĕн ятлă?», «Мана мĕн пеххилетĕр?»тесе чўречерен шаккаса кăшкăрса çўренĕ. Лешсем: «Çăкăрпа тăвар» е «Сар каччă е сар хĕр»тенĕ.

Кашни килтех пăрça ăшаланă.



Сурхури чăвашсен пит авалхи уявĕ пулни курăнать. «Сурхури» сăмах икĕ пĕлтерĕшпе çыхăннă: *«сур»* (сура) «шыв» тенине пĕлтернĕ. Сур турри (шыв турри) — Сурăм. *«Хур»* — инкек, кӳренӳ. «Сурхури» ăнлавра сывлăх пултăр, сур-хур кайтăр тесе сунни пур. Сур-хур хăвалама çылăхсăр чунсене, ачасене, хутшăнтарнă. Вĕсемпе ăшă кăмăллă пулма, вĕсене кучченеç пама тивнĕ. Çамрăксем юмăç ярасси, çветке пуласси каярахпа, чăвашсене тĕне кĕртсен тин, пуçланнă.

Хальхи вăхăтра ку уяв (кăрлачăн 7-мĕшĕ) христиансен раштав праçникĕпе çыхăннă.

Сурхури кунĕсенче ача-пăча ушкăнпа килĕрен киле çӳренĕ.



Ах, кинеми, кинеми,
Çитрĕ акă Сурхури.
Пире кукăль памасан
Сурăх ури хуçăлтăр!
Пире кукăль парсассăн
Сурăх ури сыпăнтăр...

Сурхури уявне хĕрсемпе каччăсем пуçтарăнса, купăс каласа ялта хăйсен тăванĕсем патне кĕрсе çӳренĕ, кил хуçисем сăра-эрехпе, янтăланă мăйăрпа çамрăксене сăйланă, нумайăшĕ пăрça, пан улми, купăста куклисемпе хăналанă. Вĕт-шакăр ачасем пухăнса каччăсем, хĕрсем юрласа ташланине курса çӳренĕ.

# Юмăç майĕсем

Çав каç ялти урамра ача-пăча сасси кĕрлесе, шавласа тăнă. Хĕрупраççемпе яш-кĕрĕмсем тата урăхла камит пулнă. Вĕсем юмăç пăхмалла пулнă.

.



Урай варрине çăкăр, укçа, турпас, тăвар, куçкĕски хураççĕ, чашăкпа шыв лартаççĕ, сакань алăкне уçса хураççĕ. Хĕрсем е каччăсем чăх тытса кĕреççĕ. Чăххине çавăраççĕ-çавăраççĕ те урайне яраççĕ. Урайне хунă япаласенчен чăх хăшне сăхать, çавăн тăрăх чăх хуçин (тытса кĕрекенĕн) мăшăрĕ мĕнле пулассине калаççĕ. Сакане сиксен — мăшăрĕ вăхăтсăр вилет теççĕ. Тата чăххи кăçалхи çамрăк чăх пулсан ăна тытса кĕрекенĕн мăшăрĕ хăйĕнчен кĕçĕн пулать имĕш.

Çамрăксем тула тухса хапха урлă çăпата е калуш ывăтаççĕ. Пуçĕпе хăш еннелле ўкет, хĕр çав еннелле качча каять, каччă пулсан — çав енчен хĕр илет.

.

Картана кайса сурăх урисем те тытаçççĕ. Кашни хăй тытнă сурăх урине татăкпа е çиппе çыхса паллă тăвать. Ирхине кайса пăхаççĕ, хура сурăх пулсан мăшăрĕ хура çўçлĕ, шурă сурăх лексен сарă ççлĕ пулать теççĕ.Сурăх ури тытнăран сурхури теççĕ ĕнтĕ çав уява.







Сурхури, Сурхури,
Сурăхсем путек тăваççĕ,
Хĕрсем ача тăваççĕ.
Пире кукăль çитермесен
Сурăхсем хĕсĕр юлаççĕ, —
тесе юрланă çамрăксем.

Çапла вара, Сурхури уявĕ пĕр эрнене пынă. Ваттисем кўршисемпе пухăнса Сурхури уявланă.

Сурхури эрнинчех крещени уявĕ те пулса иртнĕ.Крещени вăхăтĕнче çветкесем килрен-киле çўренĕ. Вĕсем кивĕ япаласем тăхăнса, пичĕсене хупласа çўренĕ.





Е килĕ умĕнчи мунча пурипе е вутă купине салатса урăх çĕререх кӳрши патне купаласа хунă е салатса пăрахнă. Урамра иртсе пыракан çынна тĕл пулсан, ăна юр çинче йăвалантарнă, хĕвне юр тултарса янă. Пĕтĕм ял кĕрленĕ: кулнă, çухăрнă, ахăрашнă. Каç пулттипе чӳречерен шаккаса-хăратса çӳрекенсем те пулнă. Вĕсем пăтана çип çине çыхтарса чуречерен шаккаса тăнă. Шӳте юратакан ӳркенмен.



Çветкесен «тивĕçĕ» ялтан усал сывлăшсене,чир-чĕрсене хăваласа ярасси пулнă.

Эрне вĕçĕнче кӳлĕ çинче пăр касса вакă тунă, шыва кĕрсе тасалмалла пулнă. Чăнах та пăрлă шыва хăшпĕрисем чăмса тухнă, ыттисем вара мунча хутса тасалнă.

Çакăн хыççăн çĕнĕ çул уявĕсен тапхăрĕ вĕçленнĕ. Çамрăксем хĕллехи вăрăм каçсенче улах лармa пуçтарăнсан нумайччен çĕнĕ çул мыскарисене аса илнĕ.



Карлач уйахĕн 14-мĕшĕнче çын патне кайма юраман. Ирхине ирех чи аслă кил хуçи пÿрт йĕри-тавра çаврăнса кĕнĕ те «Çĕнĕ çул старикки е карчăкки килчĕ. Чăххăр-чĕппĕрсем ăнса пулччĕр»- тенĕ.

Ăнсартран, асăрхамасăр кам та пулсан килсен килекене минтер çине лартса сăмахсем каланă. Выльăхсем ăнмасран хăранă, пĕр-пĕр выльăхĕпе мĕн те пулин начарри пулсан çак кун килнĕ çынна çулталăк тăрăшшĕпе вăрçнă.



**Крещенке** – чиркӳ уявӗ. Пирӗн ялта ӑна ҫулсерен кӑрлач (январь) уйӑхӗн 19-мӗшӗнче уявланӑ.Ирхине кӑмака умӗнче йӑва пӗҫернӗ.Йӑвана ҫӑкӑн пек тунӑ:малтан ҫӑкӑр валли чуста хунӑ,чуста хӑпарсан ӑна унанӑ та пӗчӗк татӑксем каснӑ.Кӑшт хӑпарсан ҫатма ҫине хурса кӑмака умӗнче икӗ енне те ҫаврӑрса пӗҫернӗ, пиҫнӗ ҫимӗҫе пылак шывӗпе сиктернӗ. Малтан ҫак ҫуртри килхуҫи ваттисене асӑнса ,унтан выльӑхсем йӑва пек мӑнтӑр пулччӑр тесе вӗсене те ҫитернӗ.









# Социалла тĕпчев



Пĕлмеççĕ



# Пĕтĕмлетӳ

Кашни халăх йăла- йĕркипе çамрăксене яланах лайăха вĕрентнĕ, ватти-вĕттисене хисеплеме, кăмăллă, тараватлă пулма, туслăха çирĕп тытма, ĕçчен те сăпайлă та ăслă,тӳрĕ те ăшă кăмăллă пулма хистенĕ.

Паянхи кун ялта çак йăла пĕтсе пырать.

Çветка тухасси те манăçать. Сайра хутра ачасем çветка тухаççĕ, аслăраххисем тухмаççĕ те ĕнтĕ. Крещенке кунхине йава пĕçересси те манăçса пырать.



# Усă курнă литература

1.Максимов В.В.Как ты хороша, родная Шемурша…Обряды, традиции, фольклор.Чебоксары,2002г.

2.Иванов В.П., Николаев В.В., Димитриев В.Д. Чуваши: этническая история и традиционная культура. Чебоксары, 2000.

3.Культура Чувашского края. Часть I: Учебное пособие /В.П. Иванов, Г.Б. Матвеев, Н.И. Егоров и др./ Сост. М.И. Скворцов. – Чебоксары: Чув. Кн. Изд-во, 1985

4.Скворцов М.И.. Культура Чувашского края. Чувашское книжное издательство. Чебоксары 1994г.